28-106



# CĂВĂ КĔНЕКИСЕМ

1. **Н. И. Полоруссов**. Шелепи сăввисем. I мĕш том. 168 стран. **Хакĕ 65 пус**.
2. **Н. И. Полоруссов**. Шелепи сăввисем. II-мĕш том.78 стран. **Хакĕ 40 пус.**
3. **Алентей**. Пирĕн сăвă. Çтихсен пуххи.31 стр. **Хакĕ 25 пус**.
4. **Ваçанкка**. Хастарлăх. Комсомол йурри-сăввисем. 56 стран. **Хакĕ 35 пус**.
5. **Хусанкай**. Уйартсан. Сăвăсен пуххи. 75 стр. **Хакĕ 35 пус**.
6. **Е л к е р.** Самана. Сăвăсен пуххи. 88 стр. **Хакĕ 40 пус.**
7. **Рсай.** Çамрăк вăхăт. Сăвăсен пуххи. 54 стр. **Йўнетнĕ хакĕ 16 пус.**
8. **Окт̆апĕр хисепне**. Окт̆апĕр Револђутси 10 çул тултарнă çĕре кăларнă спорнĕк. 36 стр. **Хакĕ 35 пус.**
9. **Лашман**. Савни йенђĕкĕ. Поемă. 20 стран. **Хакĕ 5 пус**.
10. **Çирампи**. Вирйал. 18 стран. **Хакĕ 5 пус.**

---

**ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРАМЕ**
Шупашкар, Канаш урамĕ, 15.



( Сеспĕл Мишши )

ÇЕÇПĔЛ МИШШИ.

# СĂВĂСЕМ

Реҭактăрĕ Н. ВАÇАНККА

ÐĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар—1928 ç.

Типография
„ЧУВАШСКАЯ КНИГА“
Чебоксары, Чувашская 6.

Государственная
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР
г. Чебоксары, пр. Ленина, 16-в

Чувашлит № 1336 Зак. № 94 Нап. 3000 экз.

# УМСĂМАХ.

## ВĂХĂТ ÇИТĔ.

*Вăхăт çитĕ. Ђăваш ђĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕтђ пулĕ, хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ—ђăваш йурри те йанраса кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнтђене, хĕрлĕ хĕвеле савса йурлĕ вăл. Ђăваш йурринтђе—таса пĕлĕт çумĕнтђи тăри йурри илтĕнĕ. Ђăваш йурринтђе тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман ђăшлĕ. Вĕçĕхĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи хуйхă сасси илтĕнĕ. Телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнтђе кĕсле сассин йанраса тăрĕ, çакă — ђăваш йурри пулĕ. Ђăваш сăмахĕ кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ!*

*Авалтанпа ђăваш хĕсĕкре пурăннă: Мĕн асап курман, мĕн тӳсмен вăл хăй ђĕлхине сыхласшăн! Пуçа усса, çĕлĕке пусса лартса, йут халăхсем хушшинтђе шарламасăр ларнă вăл. Пусмăрласа, хĕстерсе саламса йанă ăна.*

*Унталла-кунталла, вăрман айне тарса пытаннă. Мĕскĕн ђăваш! Мĕскĕн ђăваш! Сапăнса, уйăрăлса пĕтнĕ сан çыннусем. Йут халăхăн пуйанĕсем сан ђĕлхӳне путарасшăн тăрăшнă.*

*Ђăваш çапах та пур асапран, пур хурлăх айĕнтђен ђăваш йатне çĕртмесĕр ку тарана çитерне. Терт хушшинтђе, йут халăх айĕнтђе*

*тъăваш тъĕлхи çухалман. Ĕмĕрсем иртсе пынă. Ђăваш шăппăн калаçнă. Ђăваш тъĕлхине пур тавраран тулланă. Вăл çавах та, халĕ те, тъĕрĕ, халĕ те сывă. Пур мăшкăла пăхмасăр—халĕ те сывă. Сывă вăл! Сывă пултăр малаллх та! Çак ĕç—тъăваш малашне хăй тъĕлхипе аслати алтса, çиçĕм çиçтерессине палăртат. Çак ĕç—пире шантъăк парат. Шанатпăр! Вăхăт çитĕ!*

*Камăн шантъăк çук, кам хăй тъăвашшинтъен намăсланса тъăваш йатне çĕртнĕ—çавсене епĕр тъăвашла кутран тапса ывăтатпăр.*

*Шантъăк пуррисем—телейлĕ. Авал асаттесене мăшкăл тунине манас мар. Мăшкăл айĕнтъен тъĕрĕ тухнă тъĕлхе тĕнтъерен çухалмĕ.*

*Ку тарантътъен тъăваш тъĕлхийĕ илтĕнмен,—малашне тъăваш йурри илтĕнĕ; тъăваш сăвви, тъăваш сăмахĕ, Атăл хумĕ пек, вăрман васси пек, кĕсле сасси вырăнне пулĕ. Ђăваш тъĕлхи тимĕр татĕ, çивĕтъ пулĕ.*

*Вăхăт çитĕ! Вăхăт çитĕ!! Вăхăт çитсен çакна çыракана: „ку тъăн каларĕ“, тесе асăнĕç.*

*(„Сунтал“ № 1—1924 ç.).*

Çакăн пек калакан хĕрӳллĕ поет, **„Хĕвел урилле пин çын йуррипе“** Аслă Октăпĕр тивлеђне мухтакансенер, **„Çиçĕм ури пек çип çивĕђ ухă, ђул касса вут кăлармалла хурăç пек“** ђăваш ђĕлхи тăвасшăн пур вăй-халне пама хатĕр пулса, çунмаллипех çуннă—Çеçпĕл Мишши... Çамрăк талант, вăхăтсăр вилнĕскер

Пĕр йенђен—калама çук йанăравлă, савăнăçлă, револђутсиллĕ, тепĕр йенђен—асаплă, хĕнхурлă самана.

Мишша—Канаш районĕнђи Касак-касси ађи. Унта вăл 1899-мĕш çул нойапĕрĕн 17-мĕшĕнђе çуралнă. Мишша ашшĕ—ђухăн

хресҫен. Вăл ĕҫсе супса, нервă ҫирне йерсе, Мишшапа амăшне патак тивертсе пурăнни ҫитмен—Мишша 12 ҫул тултарнă тĕлелле—вăл Мишшан муҫҫĕшне пуртăпа касса вĕлерет те, хăй 12 ҫуллăх каттăркăна ленкет, Мишшасене ҫын сăмаххи айне тăват, кĕтӳ хыҫҫăн уттарат... Унтан Мишша умĕнҫе—шкулсем, ҫеминари, сăвă-йурă, парттипе комсомол[1]) ĕҫĕ, Шупашкарта Ревтрипунал пуҫлăхĕ, Йуҫтитси Пайне пăхаканĕ... Йуҫтитси ҫурҫĕ ҫунат, елексем-мĕнсем, тĕрме—ерех савăҫĕн путвалĕ, ура йухма тытăнни, Кĕнеке Куҫаракан Комиҫҫи, Крым, выҫлăх, асаплă пурăнăҫ... Украйнăри Оҫтĕр хула пахҫинҫи ҫăка туратти, пăйав, 1922-мĕш ҫул, ийунĕн 15-мĕшĕ—мăйĕ ункăланат[2]).

Ҫакăн пек палăраҫҫĕ Ҫеҫпĕл поетăн кунҫул йĕрĕсем. Ун ҫинҫен каламалли нумай. Кун пек поет кашнă сăвăра „Тăван ҫĕршыв", „Ҫăваш ҫĕлхи", тесе вирлĕрен вирлĕ кăшкăрса пыни те ҫылай сăмах ваклаттармалла. Анҫах ку умсăмахра епĕ ун ҫинҫен кĕскен ҫеҫ ҫыратăп: кĕнекине сăввисем ытларах кĕҫҫĕр, тетĕп. Вĕсем тăрăх Ҫеҫпĕле хăйне, унăн ҫĕри мĕнле ҫунса хĕмленсе тапнипе лайăхрах курма пулат.

Ҫеҫпĕл М.—ҫĕнĕ формăллă (тонĕккăллă) ҫăваш сăввишĕн кĕрешме сăмах панă поет. Вăл сăнлăх ăсти, тата вырăссен имашинисĕсемпе[3]) питĕ инттересленнĕ. Ҫимволĕксен пултаруллăхĕпе ҫамрăклах паллă клаҫҫĕк поетсемпе паллашса ҫитнĕ. Литтераттурă вулама питĕ йуратнă.

Вак халăх кулҫттури ыйтăвĕсем ăна ниҫта та канлĕх памаҫҫĕ. Кашнă сăввинҫех вăл ҫăваш ҫĕлхине асăнат, ăна вăйлатассине нимрен хакла хурат. Ҫăваш ҫĕлхи мĕн тума ҫав терри хаклă иккенне Ҫ. М. лайăхах пĕлет, унпала ҫăваш поеҫĕ: **„йăвăр тимĕр сăнҫăртан хăтăлнă ҫăвашсене, паттăр та, хăватлă саслăн ҫĕн тĕнҫен ҫĕн пурнăҫне йуратса тăма калатăр"** тет вăл „Тинĕсе" йатлă сăввинҫе. Ку тĕрĕс. Анҫах, клас кĕрешӳне йаланах асра тытакан, ăна ҫунҫĕререн йышăнса, ҫехсем ҫухне ирĕккĕн Хĕрлĕ ҫара кайнă комунисах, „Ҫăваш ҫĕлхи" тенĕ сăмахпа „Револҫутси" тенине пĕр карглашка ҫине хурат: **ҫăвашлăх** умне кайса ӳксе, вирлĕнех натси кĕвви ҫине ҫитсе пусат, ҫунакан ҫĕринҫен шовинисла хĕм таткисем те вĕресе тухаҫҫĕ.

Ку—Ђăваш республĕкĕ тухнă хыççăнах хăшĕпĕри, аслă вырăнта ларакансемех: Мĕне вăл ђăваш ђĕлхи? Ун çинђен каласса ђĕлхене варалас пулмаст, ђăвашĕ хăй те.., тенĕ вăхăтра пурăннă май пулнă. Ун ђух саманисем çаплађђĕ. Халĕ Çеçпĕл Мишшин çак „пин çын йурри" пĕрђисене çаплипех ђăваш ĕççынни умне хурас терĕмĕр. Ун пултаруллăхĕпе тĕплĕрех паллашар.

Çеçпĕлĕн пур сăвви те çак спорнĕкре, теме пултараймастпăр[4]). Кусемсĕр пуçне унăн вырăсла çырнă сăвăсем ђылай (Тетĕшри хаçатра пиђетленнĕ, ман алăра пĕр-иккĕшĕ пур), вăл пĕр романăн 3 пайне тата пйессă çырнă, Л. Толстойăнне—„Хатши Мурат" куçарнă, Лермăнттăвăн „Мтсыри" йатлă поемипе туртăшађђĕ. Те куçарса ĕлкĕрђĕ вара. Тетĕш çеминаринђе алăпа çырса кăларакан шурналта (Çеçпĕл М.— ретактăрĕ) унăн статйиасем, сăвăсем ђылай, тата Украйнăра пурăннă ђухне вăл пысăк поемăсемех çырма тытнă. Украйнăри ђи çывăх йулташĕ—Покрышђă Хĕветĕрĕ пĕлтернĕ тăрăх, Çеçпĕл просветенисенђен нумайĕшĕ Ђерникăв окрăкĕн сут архивĕнђе пулма кирлĕ. Вĕсене Çеçпĕл М. хăйнехăй вилнĕ хыççăн арĕслесе илсе кайнă. Кăçал 7—8 хут çырса та унтан теме ответ памарĕç. Малашне Çеçпĕлĕн сăввисене çине ăрсах пухса, çырăвĕ-мĕнĕ[5]) кађкипе пĕрле, унăн пурнăçне лайăхрах çутатса, тепĕр кĕнеке кăларма хатĕрленес пулать.

Çеçпĕл Мишши ђăваш сăвви пирки мĕн калланине[6]) палăртас майпа, спорнĕке унăн „Сăвă çырассипе утарени правĕлĕсем" йатлă статйине кĕртетпĕр.

Поетăн пурнăçĕпе, пултаруллăх çулĕсемпе, унăн ђунхавалĕпе паллашас тейекенсене „асăрхаттарнинђе" каланисене астуса пыма*) сĕнетпĕр. Сăвăсем çумне хушса кăларнă çыру таткисем те ку йенђен ђылай усăллă пулассăн туйăнать.

Ку кĕнеке „кăвар ђĕреллĕ" Çеçпĕл Мишшин хĕрӳллĕхĕпе тата ђăваш сăввинђи сăнлăх пуйанлăхĕпе паллашмашкăн йатнех пулмалла.

**13/X--1928 ç Вçанкка.**

[1]) Çакăн пек паллă лартнă вырăнсене асăрхаттарнинђе вула—39-мĕш стр.

## Ҫӗн Кун аки.

Кӑвак ҫутӑран шӑратнӑ акапуҫ
Туртийӗ хушшинҕе хӗвел ташлаҭ:
Ҫӗн Кун—шевле саррипле ылттӑн пуҫ—
Ҕӑваш уйне ака тума тухаҭ.

Ҫӗн Кун аки пуҫӗн хӗп хӗрлӗ тимӗрри
Касса-касса уй урлӑ кас тӑваҭ.
Кас-кас айне ҕӑвашӑн иртнӗ ӗмӗри
Вилсе выртса пытарӑнса пыраҭ.

Ҫӗн кун[7]) пӑхаҭ: ун ылтӑн аки пуҫ
Кӑпӑшласа хуратрӗ (хытнӑ) уйсене;
Сип-симӗс улӑх урлӑ тӗпсӗр сив ҫил—куҫ
Уйсем ҫине савса сапаҭ шывне.
Ҫӗн Кун пин-пин кӑварлӑ хурӑҫ аллипе
Сар хӗрлӗ кунтӑкран уйсем ҫине
Кӑварлӑ ывӑҫпа пин, ҫӗр пин ҫӑлтӑр акрӗ.
Ирхи шевле ун хыҫҫӑн ылтӑн сӳрипе
Ҫӗр пин ҫӑлтӑрлӑн ҫунан Ҕӑваш Ҫӗрне
Тӗр тӗрлесе, сӳрелесе пӑрахрӗ.
Ҫӗн Кун акни шӑтма вӑхӑт ҫитсен,
Ҫӗн Кун умне хура ҫӗр айӗнҕен,
Хӗвел калҕи пулса хӗвеллӗн сарӑлса хӑйуллӑн
Ҕӑваш ҫыннин кунҫулӗ тухӗ.
Укаллӑ, ылтӑн кӗмӗллӗ хӗлхемӗ унӑн
Кӗсле сасси пулса ҫӗр тӑрӑх шуххӑн йухӗ.

Хăватлă, çĕн ҕĕрелле çĕн ĕмĕр ҕăвашĕ
Хулпуççипе кăвак пĕлте пернсе[8])
Кунçул уйне тухса, хĕвел тумтир тумланĕ,
Çĕн Кун ăна ыталĕ савăнса, аҕашшăн;
Умне, çĕн çул çине, çĕн ҕеҕексем ҕĕртсе
Инттернатсионал кĕперĕ анĕ.

Крым, утă уйăхĕн 7-мĕшĕ, 1921 ç.

## Катаран каç килсен...

Катаран каç килсен, каçхи кунăн мĕлки
Уйсене ыйăхпа хупласан,
Йĕркерен-йĕркерен тĕрлĕ шухăш йĕрки
Пуçăма пуçтарна пуçласан, —
Ĕлĕкхи ĕмĕрсен ĕмĕлки-кĕлетки
Куçăма курăнаť айакран.
Ĕлĕкхи ĕмĕрсен ĕмĕлки хушшинҕе
Ҕăваш çĕрĕ мана курăнаť:
Ман çĕршыв хĕрлĕ йунлă хĕрес çумĕнҕе
Çакăнса, çыхăнса тăрайаť.
Кăмрăкланнă асаплă ҕăваш ҕĕринҕен
Йун тумлаť, йун тумлаť—хĕрлĕ йун.
Ҕăваш пуçĕ çинҕе хуп-хура сивĕ кун
Шăхăрса ахăраť пур йенҕен...
Çĕр иртсен—ирхи кун хĕвелтухăç йенҕен
(Тĕнҕене уйартса,—сывлăша шăрçа
Пек шăратса) кĕмĕл саслăн килсен, —
Ман йуратнă çĕршыв вилĕмрен ҕĕрĕлни,
Вăл асаплă хĕрес çумĕнҕен çăлăнни
Пур йенҕен те саваť куçăма.

Евпаттори. 16-VI—21 ç.

## Ҫӑваш ҫӗлхи.

*(Ипов йулташа хисеплесе)*

Тӗнҫене тасатрӗ ирӗк вуткӑварӗ,
Ҫут тӗнҫе ҫуталҫӗ, иртрӗ авалхи.
Тӗттӗме тӗп пулҫӗ, мӑшкӑл иртсе кайрӗ—
Тин ирӗке тухрӑн, тӗп ҫӑваш ҫӗлхи!

Миҫе ӗмӗр витӗр асаппа тухмарӑн,
Миҫе ҫиҫӗ йутӑн мӑшкӑлӗ пулса...
Ҫапах паттӑр йултӑн, вӑйна ҫухатмарӑн,
Хаљ те пулин ҫивӗҫ, кӑвартан таса.

Йӑвӑр асапран та, тимӗр сӑнҫӑртан та
Есӗ парӑнмасӑр хӑтӑлтӑн пулсан—
Пулас пурнӑҫра та ҫивӗҫпе хӑватлӑх
Йут ҫӗлхесенҫен те кайа пулмӗ сан.

Кӑмӑллӑ ҫӗршывӑн кӑмӑллӑ ҫӗлхиҫӗм!
Иртнӗ хурлӑхушӑн ҫитӗ ырлӑху:
Хӗрлӗ хӗрнӗ хурҫӑ, ҫунтаракан ҫиҫӗм,
Вӗри вутлӑ ҫулӑм есӗ пулӑн ху.

Аслӑ Атӑл урлӑ, Атӑл шывӗ майӗ,
Вӑрман витӗр кайӗ мухтавлӑ йату,
Кӗсле-кӗвви саслӑ йантраттарса кайӗ;
Уйӑххӑн-хӗвеллӗн ҫунӗ хӑвату.

Атӑл хумӗсенӗн шавланисене те,
Хӑна та ӳстернӗ Ват Шупашкара,
Ирӗклӗ ҫӗршывӑн ырӑ ирӗкне те
Йурӑ хурса мухтӑн асӑнса вара.
Сана шанаканӗ, ҫакна ҫыраканӗ
Ҫӗр айӗнҫе вیртӗ тӑлӑххӑн ун ҫух,

Хăй çийĕнђи çĕрĕ ăна пусса анĕ,
Сан ђапна курмашкăн тăма пулас çук.

Ун çинђе ђăвашăн ђĕлхи ђапĕ пулĕ,
Тăпри çинђе йанрĕ ирĕклĕх йурри,—
Вара вилнĕскерĕ канлĕ-канлĕ выртĕ.
Канлĕ, çăмăл пулĕ çийĕнђи тăпри.

## Ђăваш ађине.

Пĕлтер мана, тăван çĕршывăм:
Хăçан кăтартăн халăхна
Ху ђĕлхӳне хăват кĕртмешкĕн
Тĕнђене килнĕ ывăлна?

Кăвар-ђĕре! Кăвар ђĕлхеллĕ
Ђăваш ађи, сассăна пар!
Тухсам кунта, сана кĕтеççĕ.
Килсем! Килсем! Ес пур,—çук мар.

Ђасрах килсе хăватлăх кĕртђĕ
Ђăвашăн капăр ђĕлхине.
Çунтартăр çулăмлă, кăварлă
Ђĕлхӳ çынсен ђĕрисене.

Ĕмĕрлĕхе йату сан йулĕ,
Шупашкартан Кавал таран,
Çĕрпӳ, Ђикме, Йетĕрне урлă
Йурру сассийĕ кайĕ сан.

Ђăваш ђĕлхи ăсти! Кăварлă
Ђĕрӳ сан сисĕ ђĕннине.
Шанатăп. Ĕмĕте усратăп:
Ес килĕн. Килĕн тĕнђене!

Шупашкар, 1920 ç.

## Ђăваш поетне Ахаха асăнса.

Тăван çĕршыв ђĕлхин малашнехи çинђен
Шухăшласа, пуçа тĕрлĕ шухăш килсен,
Сан иртнĕ ĕмĕрў, çĕре кĕнĕ поет,
Ђуна пăђăртаса йалан аса килет.
Ђăваш ђĕлхи çеçке йарса ђеђекленсен,
Сан хĕвеллĕ ђĕлхў кăварланса çитсен,
Ђăваш çынни хăна йуратакан пулсан,
Ĕмĕтсене татса, куçу хупăнђĕ сан.
Тăван ђăваш çĕрне йуратакан ђĕрў
Сикми пулса, хуллен татăлђĕ ĕмĕрў.
Пытарђĕç çĕр айне ђăвашăн ĕмĕтне,
Сăвву кĕвви анђах йулайрĕ çĕр çине.
Çурхи кунсем каллех çутатрĕç тĕнђене.
Тĕнђе симĕсленет... Хĕвел йăлтăр... Уйар.
Анђах сана пĕрех: сана, вилнĕскерне
Çуркуннехи тĕнђен илемĕ кирлĕ мар...
Калас килет сана: Ђăваш ђĕлхи илемĕ
Ўссех пыраť. Тăрсам! каллех сăвă çырар.
Анђах, мана ђĕнсе, мана: илтетĕп, темĕн,
Вилнисене тĕнђе илемĕ кирлĕ мар...
Çыврах, тăван поет!.. Сăвву кĕввисене,
Сан сăмаххусене никам та манас çук.
Ђăваш ђĕлхи пур ђух тăван поет йатне
Вĕри, кăвар ђунсем савма пăрахас çук.
Ђăваш поеђĕсен сăвви-йуррисене
Вула-вула ђунран хавасланнă ђухне,
Сан мĕскĕн ĕмĕрў, çĕре кĕнĕ поет,
Ђуна пăђăртаса йалан аса килет.

1921 çул.

## Ђăн ђĕрĕлнĕ.

*(Ирĕклĕ сăвăсем[0]).*

Ей, ваттисем! иртнĕ ĕмĕрĕре
Асап ђăтса иртернисем!
Мĕн авалтан ђăваш ђĕлхи
Асап ђăтни аса килети сире?
Сире аса килети авалхи?
Шухăшлăрха! Астăвăр, ваттисем!
Ђăваш çынни авал ђухне
Пуçне ђиксе шăппăн çӳренĕ,
Тункатаран та шикленнĕ...
Ђăваш ђĕлхи асап айне
Путарăннăђђĕ ун ђухне...
Ей, ваттисем!
Ей, ват çынсем!
Авал ђăваш асаплă пулнине
Çамрăксене каласа парăр;
Тăван çĕршывăн капăр ђĕлхине
Йалан савма хушса хăварăр.
Ей, ваттисем! Пĕтĕм ђĕререн
Сире пиллетпĕр ыр пилпе.
Есир асапсене парăнманнипе
Ђăваш ђĕлхи ђĕрĕлђĕ вилĕмрен.
Кăвак хуппи пĕлĕт тăрĕнђен
Ђăваш çĕрне çутатса йађĕ.
Тăван çĕршыв ђĕлхи хăвађĕ
Ђĕрĕлсе тăђĕ вилĕмрен.
Ђăваш ђĕлхи текех ђухăн мар,
Ђăваш ђĕлхи ђĕрĕлђĕ вилĕмрен.

Ей, ҫӑвашсем! пӗтӗм ҫӗререн:
— Ҫӑн ҫӗрӗлҫӗ, тесе кӑшкӑрар.
Есир тата, вӗри кунсем!
Кӑвар ҫунсем, йашсем, хӗрсем!
Каҫ-каҫ урамсене тухса
Кӗвӗллӗ йурӑсем хурса
Тӑван ҫӗршывӑн ҫӗлхине
Мухтав тума манса кайман-и?
Ҫӑваш ҫӗлхин хӗвеллӗ илемне
Ҫунтан савса тӑма манман-и?
Пур ҫамрӑксем! ҫунат хушар:
Ҫӑваш ҫӗлхи ҫӗрӗлҫӗ вилӗмрен!
Ей, ҫамрӑксем! пӗтӗм ҫӗререн:
— Ҫӑн ҫӗрӗлнӗ! тесе кӑшкӑрар.
Тӑван ҫӗршыв вӑрманӗсем!
Ҫеҫек ҫеҫки тӑхӑннӑ улӑхсем!
Ҫӑваш ҫӗлхи хӑваҫӗ кӑмӑлне
Мухтав йурри шавласа йанрӑр:
— Авал асап ҫӑтнӑ вырӑнне
Ҫӑваш ҫӗлхи хӑватлӑлантӑр!
Сӗм вӑрмансем, шавласа ларӑр:
— Ҫӑваш ҫӗлхи ҫӗрӗлҫӗ вилӗмрен!
Уйсем, варсем, вӗҫӗ-вӗҫӗмрен
— Ҫӑн ҫӗрӗлнӗ! тесе йан йанрӑр.
Ҫӑваш ҫӗлхи текех ҫухӑн мар!
Ҫӑваш ҫӗлхи ҫӗрӗлҫӗ вилӗмрен.
Ей, ҫӑвашсем! Пӗтӗм ҫӗререн
— Ҫӑн ҫӗрӗлҫӗ!
Тесе кӑшкӑрар.

**Акан 20-мӗшӗ, 1921 ҫул**

* * *

Ђǎваш! Ђǎваш!..

. . . . Ђǎваш! Ђǎваш!..

Сан ыйǎхлǎ уйусене,
Сан лǎпкǎ кǎмǎллǎ, ађаш,
Йǎваш-айван йалусене
Савмашкǎн манǎн халлǎм çук.
Ђǎваш тĕнђи çывхарнǎ ђух
Ђǎвашǎн ђунĕ йǎваш-ши?
Анаслǎ ыйǎхǎн ǎшши —
Вырǎнлǎ-ши?.. Вырǎнлǎ-ши!..

Тǎван ђǎваш хǎйуллине
Вǎл вǎйлине курасђĕ ман.
Ђǎваш!..
Çĕклен те, çунатлан!
Куçна тĕлле хĕвел çине.

. . . . . . . . . . . .

Ђǎвашǎн ǎсĕ — хурǎç пул,
Пǎр кас, — ак çирĕп ђул —
Ǎспа ђул кас та, вут кǎлар!
Ђǎвашǎн ǎсĕ! Вуткǎвар,
Хĕртсе хĕретнĕ хурǎç пул!

Ђǎваш! Ђǎваш!..
Ђǎваш! Ђǎваш!..
Çип çивĕђ ухǎ йĕппилле
Пĕр ђашкǎрса вĕçсе тĕлле, —
Çут тĕнђене тĕлле — йĕпле.
Ђǎваш ђĕри! Хǎйуллǎх вуђаххи
Пулса тǎр! Ылттǎн шǎратан
Хуран пек ђашкǎрса вĕре.

Ђăваш ђĕлхи, ђăваш ђĕлхи,
Хĕвел кăварĕпе вутлан.
Çĕкле ђасрах тăван çĕре.
Ђăваш ђĕлхи çĕлен сăххи,
Хайар аçа-çаппин ухxи
Пулса кĕр çĕнĕ ĕмĕре.
Çил-тăвăл килнĕ вăхăтра
Йăрйар çут çиçĕмĕн ури
Сиксе çӳрет пĕлĕт хушшипе—
— Çапла тăван çĕршывăмра
Хăйуллă пурнăç тымарри
Хăйуллă пурнăç таппипе
Пĕр ђарăнмасăр таптăри!

Крым, Утăн 5-мĕшĕ, 1921 ç.

## Пуласси.

*(Вырăсла кĕвĕ)*

Çил-тăвăл иртсессĕн йăлтăра çанталăк
Кăмăллăн та лăпкăн ађашланса канĕ.
Йумахри илемлĕ çут кĕмĕл çурт майлă
Çут тĕнђе çуталĕ, çĕнелсе лăпланĕ.

Ирĕклĕхшĕн вилнĕ тăвансенĕн йунĕ
Ђĕлтĕрти çеçкеллĕ хĕрлĕ ђеђек пулĕ.
Кĕмĕл сывлăм шывĕ ђеђек çинђе çунмĕ,—
Çунĕ çут тĕнђешĕн тăкăннă куççулĕ.

Ђухăнлăх, пуйанлăх, уйрăмлăх йăранĕ
Ирĕкпе çĕнелнĕ пурăнăçран тарĕ;
Ђĕрере ађашшăн çунĕ, çулăмланĕ
Тантăшлăх, тăванлăх, йурату кăварĕ.

(Ăçта çырни паллă мар).

## Ҫăваш арăмне.

Хура-шур анҫах курмашкăн
Кам ҫуралса ӳснĕ?
Ҫут тĕнҫере йăвăр хурлăх
Кам ытларах тӳснĕ?
Ҫут тĕнҫере кам телейĕ
Ҫĕре ӳксе йулнă?
Авалтанпах кам кунҫулĕ
Тарҫăри пек пулнă?
— Камăн вăл?—Кунҫулĕ йăвăр,
Хурлăхлă кунҫулĕ?..
— Ҫăваш арăмĕн пулмасăр
Камăн тата пулĕ?
Ҫăваш арăмне асапшăн
Ашшĕ-амĕш ҫуратнă.
Аҫаранпах хурлăх ҫулĕ
Мăйĕ ҫине ҫакнă.

Хурт-кăпшанкă та ҫу кунĕ
Савăнса вĕҫетҫĕ,—
Ҫут ҫанталăкшăн, хĕвелшĕн
Вăл та хĕпĕртетҫĕ.
Сан ҫĕрӳ анҫах хĕн витĕр
Савăнăҫ пĕлмесҫĕ,
Вуҫах умĕнҫех вăрахăн
Ĕмĕрӳ иртетҫĕ.
Турҫка-мĕлкерен урăх
Нимĕн те курман ес,
Ҫут тĕнҫе те курма тухасшăн
Тăрăшман айван ăс.

„Хĕрарăмăн çӳçĕ вăрăм—
Ăсĕ кĕске“—тетђĕç,
Унщăн çут тĕнђе курмашкăн
Мĕне кирлĕ?—тетђĕç.
Кил-тĕрĕш тирпейлесессĕн,
Тата ĕне, сурăх
Пăхса усрама пĕлсессĕн
Мéне кирлĕ урăх?!

Çапла йеррипенех санăн
Вăйусем пĕтетђĕç.
Масар çине, ђун тухсассăн
Кайса ђикетђĕç.

Сан çине вара хурлăхлă
Çил анђах вĕретђĕ,
Усăсăр иртнĕ кунçулшăн
Шăхăрса йĕретђĕ...

Иртнĕ çулсенђе çаплађђĕ
Хĕрарăм кунçулĕ...
Малашне тек ан тăкăнтăр
Мĕскĕн ђун куççулĕ.
Ђăваш çынни те халђ ĕнтĕ
Хăй пуçне çĕклерĕ,
Ђăваш çĕршывне йуратрĕ:
„Епĕ те çын“, терĕ.
Ђăваш арăмĕ, саншăн та
Хурлăх хыça йултăр.
Пулас пурнăçу мăшкăлсăр
Савăнăçлă пултăр.

Хĕрарăмсем, есĕр те хаљ
Етем шутне кĕрĕр,
Вуђах умĕнђех ан ирттĕр,
Текех сирĕн ĕмĕр.
Ĕмĕр ђура пулма çитĕ,
Ђура пулма намăс!..
Ирĕклĕ кунçул тумашкăн
Тăрăр пурте харăс!..
Ађăрсене вĕрентме те
Есĕр ан ўркенĕр:
Ђăваш çĕрне йуратмашкăн
Вĕсене вĕрентĕр.
Ађăрсем ђăваш ђĕлхишĕн
Тăма хатĕр пулђђăр,
Йут халăхсем ĕлĕкхин пек
Ђăвашран ан кулђђăр.
Çитĕ! Шăппăр шăтăкĕнђен
Çут тĕнђене тухăр!
Етем ђунне—выљăх ђунĕ
Вырăнне ан хурăр.

1920 ç. Шупашкар.

## Иртнĕ самана.

Мĕскĕн йулташăм, хăта,
Суха-пуç çынни,
Иртсе кайнă вăхăта
Астăватăн-и?
Старшинапа тийеке,
Йе пупа курсан,
Хываттăмăр çĕлĕке
Çурă çухрăмран.
Сарлака та пысăкђĕ
Çĕр тĕнђе тавра,
Санăн ану хĕсĕкђĕ
Сарлака уйра.
Ђул-çуртсемђђĕ улпутсен,
Пурнăç—хĕпĕртў,
Сан тайăлнă çĕрнĕрен
Аслаçу-пўртў.

Ӑна, сивӗ хӗл ларсан,
Йур шӑлса кайаҭ;
Тӑррине, ҫулла пулсан,
Армути шӑтаҭ.
Кӗтессенђе улласа,
Ҫил вӗрсе выђаҭ...
Кӑмакара выҫӑхса
Ађу п'ђу выртаҭ.
Есӗ йӗпе вӑхӑтра,
Питӗ сивӗре;—
Пуйансенӗн ӗҫкӗре
Йухаҭ пыл-сӑра.
Сана пуйан ӗҫкинђе
Пӗр курка тивмест,—
Арӑму ун патӗнђе
Канмасӑр ӗҫлет...
Аса илха, пӗр ҫулне,
Шӑнкӑртаттарса,
Килђӗ-кӗђӗ сан киле
Кантур йӑтӑнса.
Куланайшӑн ӗнӳне
Кайрӗ вӑл тытса —
Ылханайрӑн вӗсене
Питӗ хурланса.
Пӳрте кӗтӗн,—ађу-п'ђу
Выҫӑ макӑраҭ,
Сӑпкара та пӗр ађу
Вилес пек выртаҭ.
Вӗсем ваљђи малалла
Мӗскер ырри пур?—
Вӗсемшӗнех пулмалла
Пӗтӗм хура-шур...
Астуха тата каллах—
Выҫлӑх пулнӑ кӗр
Ыйтрӑр халӑхпала
Ирӗклӗхпе ҫӗр.—
Вӗҫсе килђӗҫ касаксем
Ҫавӑ вӑхӑтра...
Виҫ кун йунлӑ вилесем
Выртрӗҫ урамра...
Мӗскӗн йулташӑм, ҫакна
Астуса ил те,
Ӗлӗкхи саманана:
„Тӗп пултӑр ҫав!“—те.
Ватӑ аслаҫу пӳртне
Йӑвантарса йар,
Ӗмӗрлӗх никӗс ҫине
Ҫӗнӗ ҫурт лартар!
Пур ђухӑнсем тӗнђипе
Вӑл ҫурта тӑвар;
Йӑлтӑр хӗвел ҫуттипе
Тӑррине тӑрлар!
Вӑхӑт ҫитӗ, вӑхӑт пулӗ!—
Ҫӗн йӗрке килсен,
Йухмӗ! йухмӗ тек куҫҫулӗ
Пурнӑҫ хӗсӗкрен!
Ҫӗн пурнӑҫ хӗвелӗ
Ҫунӗ ҫутатса!

Хусан, 1919 ҫ.

## Пурнăçпа вилĕм.

Ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт иртет...
Тăлăх хирте каç пулса килет.
Курăксене тайса çил вĕрет,
Çĕр çумĕпе тусан вĕçтерет...

Хирте пĕр тĕмеске пĕр пĕҫҫен...
Тăпри çине пуснă вĕлтĕрен.
Вилнĕ çын тăпри вăл çак тăпра.
Ырă çынни вилнĕ вăрçăра.
Ĕç аҫи вăл. Çĕнĕ пурнăçа
Сыхласа вилнĕ вăл çапăçса.
Ҫухăнсемшĕн хăйĕн кунçулне,
Çамрăк ĕмĕрне вăл хĕрхенмен.
Комунисăм Хĕрлĕ Йалавне
Ҫун тухиҫҫен çĕре укермен.

Çывăр, тăван, иртрĕ ĕмĕрӳ,
Вăхăтсăрах сан тухрĕ ҫуну.
Анҫах çăмăл пултăрҫҫĕ тăпру.
Канлĕ пултăр нӳрĕ вырăну!..

Мĕскĕн тăван, сан ҫуну тухсан,
Никамăн та куççулĕ йухман.
Санăн куçна арăму хупман,
Аннӳ масар çине ăсатман.
Йутри çынсем сана айакка
Пытарайнă çакă шăтăка.

Тăванăмçăм, вăрансам, вăран!
Çак вăхăтсăр йăвăр ăйхăран:
Килте çамрăк арăму кĕтет;
Аҫу: Атте хăçан килет? тет.

Ех, тăванăм, иртнĕ кунçула
Кам таварса парĕ кайалла?
Уйа ака тумашкăн тухсан,
Йурру илтĕнес çук ĕнтĕ сан;
Тек кураймăн пĕлĕт çуттине;
Илтейес çук тăри йуррине;
Кăђăрт-кăђăрт тырă вырнă ђух
Санăн аллу çурла тытас çук...

Çĕр иртет те... килет çутă ир...
Анђах ĕмĕр пĕђђен тăлăх хир.
Вĕлтĕрене тайса çил вĕрет,
Вилнисене асăнса йĕрет...

Касак-касси. 1920 ç.

## Йăвăр шухăшсем.

Шупашкартан тухрăм, тӳрех утрăм.
Атăл тăвайккийĕ çине ухрăм.
Акă куçăм умĕнђе ђăваш çĕрĕ...
Тăван çĕршыв тавра ђунăм вĕçрĕ.
Атăл шавланине итлерĕм:
— Ђуна лăплантарса пули? терĕм.
Анђах канăçсăр ђунăм лăпланмарĕ.
Пуçран йăвăр шухăш каймарĕ.
Тăван çĕршыв, сана ĕненеттĕм,
Пулас мухтавлăхна сисеттĕм...
Халиђђен шанђăкпа ђĕре çунђĕ.
Пайан теме сиссе ĕмĕт сӳнђĕ.
Шанђăксăр ђунăма сивĕ çапрĕ,
Сивĕннĕ ђĕрере вăйăм ђакрĕ.

— Килсем ђасрах, ђăваш поеђĕ!
Тесе йаланах ђун ђĕнетђĕ.
Шухăшлаттăм: акă талан килĕ—
Тăван çĕршыв ђĕлхине илем килĕ.

Çыруллăхăн пулĕ тĕрĕс çулĕ,—
Кĕнеке те пулĕ—çĕршыв мулĕ...
Анђах кунсем, çулсем иртсе кайрĕç.
Ђăваш поеђĕсем сас памарĕç,
Хаљђђен шанђăкпала ђĕрем çунђĕ.
Пайан кун ђĕрере ĕмĕт сÿнђĕ.

Шанђăксăр ђунăма сивĕ çапрĕ,
Хуйхăллă ђĕрере вăйăм ђакрĕ...

Тăван çĕршыв, йе сан та вăйу пĕтрĕ?
Йе ђăваш ђĕлхин хăват çĕтрĕ?

Йе йуг ђĕлхесем ÿснĕ майĕ
Ђăваш ђĕлхи çĕтсе, пĕтсе кайĕ?

Йе ђăваш çынни, ђăваш йалĕ
Сарлака çĕр çинђен çухалĕ?
Апла пулсан... ђĕрем хыпса çунтăр,
Ђĕрем хыпса çунса сив кĕл пултăр.

Сив кĕл хайар çилпе вĕçсе пĕттĕр,
Сивĕ çапнă ђуна вилĕм кĕтĕр...

Ват асатте çиллĕ тăвăл витĕр
Мана масар çине кайса ђиктĕр.

Тăпрам çинђе ĕмĕр çил улатăр,
Ватă йăвăçсене суллатăр.
Вил-тăпри—вĕлтĕрен тăхăнтăр,
Пуçăм çинђе çĕлен шăхăртăр.

Шупашкар. 1921 ç.

## Выç псалом.

*(Сыпăксем*[10]*).*

Кивĕ кунăн шăм алли
Хĕрес çумне çĕршыва пăталарĕ;
Тип шăллă выçлăхăн çăварĕпе
Çĕршывăма кышлаť, кышлаť, кышлаť.

I.

Пĕрене пўртсем—тар тертлĕ пўрт-çуртсем
Ыйткалакансемле халран кайса пăђланђĕç:
Хăрса хытса выртаççĕ, ђирлесе выртаççĕ,
Вилсе вырташçĕ выçă анасем.

II.

Айванăн Атăл ахлатса вырташ,
Сар хумĕсем çўп-çаплă, çĕтĕк-çатăк
Ђун хавалпе вăрахăн йăнăшаť
Мĕскĕн[11]) Атăл
Çĕршывăмшăн пĕр сассăр макăраť.

III.

Шăм выçлăхăн аллинђе çĕршывăмăн ђĕри
Пăрпа пăрланђĕ уйар ђеђеклĕ шанђăк.
Ђĕресенђе талса çухалђĕ, ах, пытанђĕ
Анђах пуçланнă ђĕрĕллĕх йурри.

IV.

Хĕвел, хĕвел! Ес пур ђух ђунăма
Çĕн йур кĕвви савађђĕ çивђĕ саслăн.
...Ђĕлхе çухалђĕ... Çĕршыв вилет пулсассăн,
Кама ес кирлĕ, йуррăм...
Кама? кала!

Кейу хули, 26—X, 1921 ç.

## Кĕпер хывăр.

Çулсем... Çулсем çинђе вилесем,
Укăљђасем панђе вил-шăмсем,
Ах, йăвăр, йăвăр, пăђă...
Ей!
Есир,
ђĕррисем,
Вилĕсем урлă, шăм куписем çинђе
Хĕвеллĕ ыран йенне
Кĕпер ђĕнтĕрлĕр.
Ах,
Кĕпер ђĕнтĕрлĕр.
Епĕ
Халран кайса ÿксессĕн,
Ман урлă таптаса каçса кайăр,
Тимĕр урăрсемпе ђĕрем çине
Хăйуллăн таптăр.
Ах!
Таптăр,
Ĕнсене хуçăр.
Кĕперне хывнă ђух еп
Халран кайса вилсессĕн,
Мана кĕпер айне
В-е-е-ç-ç!
Перĕр!
Ах,
Перĕр, перĕр!
Вăхăт — ађашлăх вăхăђ мар.
Ăш йурă вăхăђĕ кайра,
Малта хĕвел.

Ку вăхăт—вилĕм вăхăҍĕ.
Кам куçĕ куççуљ кăлармĕ,
Кам ҍунĕ ҍул —
Кĕпер урлă!
Ик ушкăн
Паттăрисем çав кĕпер урлă
Халсăррисене
Кĕпер айне перĕç.
    Çул-çул тăрăх вилесем
    Уй-уй урлă
    Купан купа виљ-шăм.
    Ей, ҍĕррисем! вилесем урлă
    Ыран патне
    Кĕпер хывăр.
Ах,
Нăшкатăп,
Хал пĕтрĕ, хул халсăр...
Ей,
Ывăтăр мана,
Веç — ывăтăр
Кĕпер айне ывăтăр мана.
Ах,
Ёнсене хуçăр.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Йулашки ҍĕл алра, йулашки ҍĕл
Апат — йулашки хуран.
Выç куçлă ыранăн виљ пиҍĕ.
Шур шăллăн пăхаť, пăхаť куçран.
Йулашки ҍĕл умра... Йулашки ҍĕл.

Йупан 30-мĕшĕ, 1920 ç. Кейу

## Пайантан...

(*Йулашки*[12]) *йун тумламĕсем*).

Пайантан ђулланса, мăклашкан,
Ăш сăмах пăрланса пыра ларђĕ,
Вăрмансем тăрĕнђен шевле тарђĕ,
Вилĕм витрĕ çĕре пайантан.

Асап тăвĕ çине çаруран
Çĕршыва çавăтса илсе карĕç.
Шупашкар хўмисен йунлă тарĕ
Çĕмĕрлнĕ ђĕремре пайантан.

Ђĕп-ђĕр йунлă мĕн вăл аллăмри?
Çуркалап, мамăклап, какайлатăп,
Йун тымарĕсене татăклатăп,
Ман вăл—Çеçпĕл Мишшин—йун ђĕри.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Тирне сўнĕ çара анђăкла
Йут çатан хушшинђе çыртăк шырăп,
Пĕр йĕпе-сапара кăнса выртăп,
Шупашкаршăн выçса йăнăшса.

Пайантан выçса типнĕ ăшран
Сив масар йăнăшни кăна пулĕ,
Мăн арман ђулĕпе ђунăм тулĕ
Пайантан, пайантан, пайантан...

6/IV—22 ç.

* * *

Хĕрлĕ-хĕрлĕ хĕрлĕ мăкăњсем,
Виçĕм çул ђеђеклĕн ђĕрлнисем,
Çил çилленђĕ, çил вĕçтерђĕçке сире—
Хăйăр хĕртрĕ çеп-çемçе çĕре.

Ђёлтёрти çеçкеллĕ мăкăнђсем
Вичĕм çул ђеђеклĕ ђĕрлнисем!
Епĕ сирĕн хуçăр—инçетре
Выçăхса сĕтĕрĕнсе çӳреп.

Хĕрлĕ-хĕрлĕ мăкăнђсене асăнса,
Хĕрлĕ мăкăнђсемшĕн хуйхăрса.
Йăлпер хĕрлĕ тăрлă мăкăнђсем
Виçĕм çул ђеђеклĕн ђĕрлнисем,

Çут хĕвеллĕ кăнтăрла ăшши
Каллех çавăрăнса килĕши?
Симĕс çитлĕ çимĕç пахђара
Кĕтсе илейĕрши хуçăра?

Хĕрлĕ-хĕрлĕ хĕрлĕ мăкăнђсем—
Виçĕм çул ђеђеклĕн ђĕрлнисем
Çил çилленђĕ, çил вĕçтерђĕçке сире—
Хуçăр выçă çӳрет инçетре.

20/III—22, Ђерникăв хули.

*
* *

Ĕнер йывăç пахђи кăмăлне
Кун-каçах туй турĕ çуркунле.

Ир иртенпех ђеђек пахђинђе
Ђĕрĕлсе çĕкленђĕ сар ђеђек.

Çамрăк хурăн туратти çинђе
Саркайăк тĕрлерĕ каçђен.

Пайан шыв-йур ђеђек пахђинђе
Йур айĕнђе хĕрлĕ-сар ђеђек.

Сар кайăк çук хурăн тăрĕнђе,
Сар кайăкăм шур-йур айĕнђе.

9/IV—22. ст. Врабoры, Черн. губ.

## Епĕ вилсен...

Еп вилсен — мана пытарăр
Çӳллĕ ту тăрне,
Йăмрасем лартса хăварăр
Ман тăпра çине.

Ман çинҫен пĕтĕм çĕршывăм
Курăнтăр вара,
Тăпрам çинҫен курма пултăр
Ват Шупашкара.

Епĕ выртăп... выртăп... Йулĕ
Вăхăт кайалла:
Ҫăваш ҫĕлхи пурнăç майĕ
Кайĕ малалла.

Вăхăт ситĕ — ҫăваш çĕрĕн
Кăмăллă ҫĕлхи
Ҫаплă пулĕ — вăлах пулĕ
Çамрăк ҫун-пахи,

Пулĕç ĕмĕрлĕх илемлĕ
Сăвă-йурăсем,
Пулĕç аслă, çивĕҫ ăслă
Кĕнекеçĕсем.

Савнă çĕршывăмăн пулĕç
Ҫаплă сăвăçсем,
Ҫаплă та илемлĕ çырĕç
Ун ҫухне вĕсем.

Ҫăваш-çыннин ҫĕлхи ҫухăн
Теме хăйакан
Пулĕши ун ҫух, пĕлесҫĕ,
Курайасҫĕ ман!

Тусăмсем! Ун ҫух çул майĕ,
Ман çине пырса,
Йурă йурласа кăтартăр—
Сăвă каласа.

Ун ђухне ман пĕлес килĕ
  Сăвăçсен йатне,
Тата: вĕсенђен хăш аслă,
  Хăшĕ ђаплине:

Йурăсемпе есĕр мухтăр
  Сăвăçсен йатне,
Хытă сасăсемпе йурлăр
  Вĕсен сăввине.

Вара епĕ хамах пĕлĕп
  Сăвăçсен йатне;
Пĕлĕп: ђăваш çырулăхĕ
  Йепле ђаплине.

Ђăвашра çĕнĕрен сăвăç
  Çуралмассерен,—
Ман тăпра çине сар-кайăк
  Пытăр ир çинђен.

Йăмрасем çине ларайтăр
  Хĕвел ăшшине.
Йанра йурăпа мухтатăр
  Ђăваш ђĕлхине.

Тăван çĕршыв çырулăхĕн
  Илемĕ çинђен,
Çамрăксем тăван ђĕлхешĕн
  Тăрăшни çинђен—

Сар-кайăк йурласа патăр
  Йăмра тăрринђен...
Йăлтăр-хĕвел йăлтăртаттăр
  Çут пĕлĕт çинђен.

Симĕс курăкпа тумлантăр
  Ман тăлăх тăпра;
Хĕрлĕ ђеђексем йешертђĕр
  Ман вырăн тавра...

. . . . . . . . . . . . . . *)

Çĕршывăма тăван халăх
Хавасламасан,
Ђун савнă ђăваш ђĕлхийĕ
Пĕтмелле пулсан,—
Усал курăк та ан шăттăр
Ман тăпра çине:
Çĕр çурăлтăр, çĕр çăттăр
Вил шăммăмсене.

Канаш 50-мĕш №, 1921 çул.

*
* *

Тăван çĕршыв, кала, пĕлтер—
Санăн йатна ђапа кăларма,
Сан ђĕлхӳне хăват кӳртме
Пултаракан ăçта пулаť?
Вуткăварлă ђĕре! Кăвар ђĕлхеллĕ
Ђăваш ађи, ăçта ес, ăçта?
Ђăваш çĕршыв сана кĕтет.
Хăçан санăн йурру-сăвву
Тăван çĕршыв йал-йалсене
Улăх, вăрман, уйсем урлă
Хăватлă çирĕп сасăпа
Йантратса йарĕ?
Çивĕђ ђĕлхӳ кăварлă сăмахпа
Ђăваш йатне—ђĕлхине
Хĕвел çути, пĕлĕт илемне
Тăхăнтарĕ...



**Покрышҫӑ Хветӗрӗ**—Украйнӑри сахал вӗреннӗ хресҫен поет Ҫеҫпӗл Миш шипе вӗсем туслӑ пулнӑ. Хӑй ҫухӑн, выҫӑ пулин те, 3-шер кун ҫимесӗр, асапланса пурӑннӑ Ҫеҫпӗл Мишшине вӑл ҫӑкӑр илме укҫа, тата кӗпе-йӗм паркаланӑ. Кайран сывмарланнӑ Мишшана хӑй килне ҫӗнсе илнӗ. Ҫеҫпӗл Мишши ҫинҫен пуринҫен ытла ҫак йулташ пӗлтерҫӗ. Хӑй вӑл пенҫи ҫинҫе пурӑнакан инвалит.

## Хурăç шанђăк.

Çĕршывăм хăйуллăн вăранĕ,
Тапранĕ кăвар кайăкла:
Çук-çук тейекен улталанĕ,
Кам: çук, тет, ун ђунĕ—ђăлах.

Унђђенха—айван пек çĕр-шывăм,
Унђђенха—ђăваш ыйăхлаť.
Ан тив, тем пулсан та, вăл вăйлăн —
Пайан ђĕрĕлсе тăрасла...

Хĕвелĕн кăварлă хĕлхемĕ
Çĕре ђеђекленĕ ђухне
Кам курнă çанталăк илемĕ
Пăрпа пăрланса шăннине?

Ан тив, хĕл шăнтса пăђăртатăр
Ăш йеншĕн сикен ђĕрене,
Хăйуллă куçпа палăртатпăр
Çĕн кун вутланса килнине.
Ђĕрем, сик хăйуллăн, хавассăн
Хăйуллăх йурри кĕвĕле —
Ђăваш ђĕрĕлнине курмалла сан,
Ăна тĕл пулса илмелле...
Курап: ђĕрĕлет ђăваш йађĕ,
Таçта аслатиллĕ саспа
Йуратнă çĕршывăн хăвађĕ
Ђасрах вăранасшăн тапаť....

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕршывăн хастар ађисем,
Вут кайăклăн вĕçĕр, ан йулăр,
Ан йулăр кунçул уттинђен.

Çĕршывăн пит-куçĕ çĕнелĕ,
Ыран-и, пайан-и вăл?—Ђас...
ам: çук, тет, çав—суйеç ђĕлхеллĕ;
Кам: мар, тет, çав—суккăр ђапрас.

Ыран-и, пайан-и... тĕреклĕн
Вутланĕ çĕршывăм ђĕри,
Кăварлă ђеђеклĕн ђеђеклĕ
Çĕре çĕн хĕвелĕн йурри.

Çĕршывăм хĕвеллĕн çуталĕ,
Тапранĕ кăвар кайăкла.
Кам хирĕç калĕçĕ,—улталĕ,
Кам: мар, тет, ун ђунĕ—ђăлах.

Кейу хули, çенťапĕр 20-мĕшĕ, 1921 ç.

* * *

Шăршлă каç йăвăрри,
Кивĕ çĕр кăкăрри
Вут хыпса, кĕл пулса вĕçтĕри.

Çĕр çунса çĕнелсен,
Çĕр çине мал йенђен
Çĕнĕ сăн çиçĕмле çиттĕри.

Çĕнĕ сăн йăлтăрри,
Ун кăвар çăмăрри
Ђĕрере Вут Сăмах ђĕрттĕри.

Шупашкарăн варри
Çиçĕм çутлăн вĕри
Çĕн сăмах вуђаххи пултăри.

Çĕн тĕнђен кăварне,
Çĕнĕ сăн çуттине
Тĕллесе пăхайман куçсене—

Çĕнĕ сăн кăварри,
Çĕн хĕвелĕн ури
Пĕр ђиксе шăтарса илтĕри.

Камăн нишлĕ ђĕри,
Пур нишли, халсăрри—
Ленђĕрти шапасем пулђђĕри.

Ей! Шевле, Сар Шевле,
Çĕр çине çул тĕрле—
Çул çине йарапан сар'силле.

Çав çулпа мал йенђен,
Çĕн тĕнђе умĕнђен,
Çĕнĕ сăн ав килет инçетрен.

Ей, вĕре, вутлă йун!
Ей, Çĕн Кун, йăлтăр Кун,
Кив çĕре çунтарса, çун! çун! çун!

Утăн 26-мĕшĕ, 1921 çул.

* * *

Инçе çинçе уйра уйар
Карталанса ђăлтăртатаť,
Йенђен йенне çапса ђупаť...
Çук, уйар мар, çут уйра мар—
Ман çамрăк ђунлă ђĕрере
Хĕвел хĕлхемлĕ хĕлĕхсем
Çитмĕл çиђ ђĕлĕхлĕн йанраççĕ...

Ма ђун выђаҭ? Йе сар хёре
Курса киленђёç куçăмсем,
Йé пĕлĕтсем ђуна саваççĕ?
Çук, çук...

Çĕршывăм ђĕрĕлет!

Пĕђик пÿртсемлĕ йалсенђе,
Ђăваш-çĕр урлă—уйсенђе
Çĕн Сывлăш ђун уçса вĕрет.
Çĕн Çул! Кунçул! Çĕн Кун килет...

Çавна кура кĕвĕллĕ ђун
Кĕсле кĕввиллĕ вутла йун.
Ман ђĕрере уйар ури,
Хĕвел ури, хĕвел йурри,
Тăрри йурри! Шевле сарри!

Çĕн сывлăш, вĕр!
çĕн сывлăш, вĕр!
Ђăваш çĕрне тĕреклĕх кĕрт.
Çĕн сывлăш, вĕр. Çĕн вăй пар!
Ђăваш ђĕри пултăр кăвар!

Ђĕре, выђа, çĕн йурă пар!
Инçе çинçе уйра уйар
Тымарсенђе хĕвеллĕн çун!
Хĕвеллĕн çун, кăварлă йун!

Кăвар ђĕрем—пин çын ђĕри.
Еп пĕр çын мар—еп хам пин-пин,
Еп пин ђăваш, еп пин-пин çын!
Ђĕрем йурри—пин çын йурри!

Евпаттори, ийÿнĕн 12-мĕшĕ, 1921 ç.

# Тинĕсе.

Вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕсĕм,
Хуп-хуран, сип-симĕсĕн,
Кăпăк тумлăн, хумлăн, хумлăн
Çырана çапса, хăйуллăн
Хумлă сулнăксемпе сулăн,
Хумлă кăпăкпа вĕре.
Ман çунатлă вутлă ђунăм,
Çĕн çĕре ђĕнен ђĕре
Кĕрешў вăйне анђах
Кăмăллаť çак тĕнђере.

Тинĕс, тинĕс, вăйлăрах
Хыççăн-хыççăн хум пăрах.
Тамăк вутлăн, тамăк çутлăн,
Вут кăварлăн, ҳар-хайаррăн
Тайăн-тайăн, çырăн-варăн
Хутлă хумлăн сулăн-уткăн.
Кĕрешў сассипеле —
Вăйлă мĕкĕрлеш саспа
Йăвăр пĕлтсене силле,
Хумсемпе çапа-çапа
Ђуллă çырана тапрат,
Хулăм ђулсене ташлат.

Тинĕс, тинĕс,—умăнта
Çĕн ђăвашăн çĕн поеђĕ;
Авалхи кунсен ĕређĕ
Ун ђунне тапта-тапта,

Ун ҫунне ҫĕри тĕпне
Хурлăхлăх йурри хăварнă.

Тинĕс, тинĕс, ес хайаррăн
Сăвăҫăн йунне-ҫунне
Вăйлă хумлă йурăпа,
Кĕрешме ҫĕнен саспа
Нишлĕлĕхсенҫен тасат.
Вăйлă паттăрлăх, хăват
Вырнаҫтар ун ҫĕрине.
Ҫунĕ ун хăйулла пултăр,
Тинĕс вăйĕпеле тултăр.
Савтăр паттăрлăх вăйне;
Ҫĕн куна, ҫĕн тĕнҫене
Йуратса ҫĕн йурă хутăр,
Кĕрешӳ ĕҫне-вăйне
Хăй ҫĕрин хĕвелĕ тутăр.
Ҫĕн поет ака та тутăр,
Утă ҫултăр,
Вутă ҫуртăр,
Ĕҫлесе ҫĕн йурă хутăр,
Туй пулсан, — ташлатăр, култăр...

Тинĕс, тинĕс, вăл санран
(Вăхăт ҫитĕ) уйăрлсан,
Савнă ҫĕршывне кайсассăн,
Йăвăр тимĕр сăнҫăртан
Хăтăлнă ҫăвашсене
Паттăр та, хăватлă саслăн,
Ҫĕрипе ҫунса, хавассăн,
Ҫĕн тĕнҫен ҫĕн пурнăҫне,
Ҫĕн кунне, ҫĕн кун-ҫулне,

Ҫӗнӗ пурнăҫ хӗвелне
Йуратса тăма калатăр.
Лăпкă халăх—пултăр паттăр.
Вăл йăваш—йăвашлăх ҫӗттӗр,
Ђун—кăвар ҫунатлăн вӗҫтӗр
Кив ҫӗртен ҫӗн ҫул ҫине.

Тинӗс, тинӗс, вăйлăраххăн,
Хăвăртраххăн, ҫăмăлраххăн,
Ђул пулсан—хăватлăраххăн,
Хыҫҫăн, хыҫҫăн хум-хумла!
Ес хăйуллăн, вăйлă хумлăн,
Йăвăр саслă, йăвăр ђуллăн,
Ђуллă ҫырана тулла.
Мӗкӗр, ахăр, кар-карла,
Вăйлă сулăмлăн, хăйуллăн,
Хыҫҫăн-хыҫҫăн хум пăрах:
Кӗрешӳ вăйне анђах
Кăмăллаӑ ман вутлă ђунăм...
. . . . . . . . . . . . .
Ҫӗн тӗнђе! Ей, ҫӗнӗ кунăм,
Кайалла ан кай, ан ђак!

Крым, утă уйăхӗн 12-мӗшӗ.

## Сăвă çырассипе утарени правĕлĕсем.

Револ̆утси пурнăçа пур йенђен те çĕнĕ сывлăш, ђĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртрĕ. Пур ĕçре те ђĕрĕлĕх. Ђăваш кунçулне çутатмашкăн, ђĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртмешкĕн, ђăваш поеçи те ђĕрĕле пуçларĕ. Хаçатсем çинђе, шурналсем çинђе çĕнĕрен çĕнĕ сăвăсем (çтихотворенисем) çапăнаççĕ. Ку ĕç пирĕн ђăваш çĕршывĕшĕн çĕнĕ ĕç. Çул шырас пулаť. Тĕрĕс çул тупас пулаť. Сăвă ĕçĕн технĕккине пултарас пулаť. Кун çинђен урлă-пирлĕ шухăш парса çырмасан, сăвă ĕçне йĕркене кĕртме ђас пулмĕ. Сăвă тăвас ĕçре пит кирли—утарени правĕлĕсене пултарас ĕç. Çавăнпа епĕр хал̆ ђăваш ђĕлхинђе йепле утарени йĕрки пурри çинђен анђах калăпăр, мĕншĕн тесен сăмахсен утарени йĕрки пĕтĕм ђăваш ђĕлхинђе пĕр пулмасан сăвă ĕçĕн технĕккине тума кансĕр пулаť.

Хăшĕ калаççĕ: Ђăваш ђĕлхинђе, хрантсус ђĕлхинђи пек, утарени кирек-хăçан та сăмахăн йулашки сыпăкĕ çине ўкет, теççĕ. Çавăнпа хăш сăвăçсем пирĕн хăйсен сăввисене—утаренисене сăмахăн йулашки сыпăкĕ çинђе туса вуласан тин кĕвĕллĕ тухмалла çыраççĕ. Ун пек сăвăсем—ђăвашла тĕрĕс вулакан çын вуласан—сăвă пек те пулмаççĕ. Мĕн тĕрĕссине пĕлмешкĕн, тĕп ђăваш калаçнине сăнамалла. Тĕп ђăвашсем пирĕн Шупашкар, Йетĕрне, Çĕрпў, Ђикме уйесĕсенђе. Кунти ђăваш ђĕлхи йут ђĕлхесемпе хутăшман, çавăнпа ђăваш ђĕлхин тĕрĕслĕхĕ çакăнта пулма кирлĕ. Ку уйессенђи ђăвашсем калаçнипе утарени правĕлĕ çакăн пек пулмалла:

1. Утарени йĕрки сăмахра „ă“ тата „ĕ“ сасăсем пурринђен анђах улшăнса пыраť. Ђăваш ђĕлхинђе „ă“-па „ĕ“ сасăсем пулман пулсан, утарени кирек-хăçан та сăмахăн йулашки сыпăкĕ çине ўкмелле пулнă пулĕђђĕ. Çавăнпа утарени правĕлĕ тĕлĕшĕнђен ђăваш аспуккинђи сăвăсем икке уйăлаççĕ. Пĕр йенђе «ă»-па „ĕ“ сасăсем,—çак икĕ сасса çуруçă сасăсем теççĕ, тепĕр йенђен уçă илтĕнекен сасăсем: а, у, ы, е, ў, и, о.

2. Сăмахра пур сыпăкĕнҫе те уçă витĕнекен сассем кăна пулсан, утарени кирек-хăçан та кайри сыпăкри уçă сасă çине ўкет.

**Кăтартни**: Ла-ша, У-ри-не, Çе-рем, ка-ла-ман, ыйт-ка-ла-кан,

3. Сăмахăн пур сыпăкĕсенҫе те çуруçă сасăсем пулсан, утарени малти сыпăк çине ўкет.

**Кăтартни**: Тă-лăх, ĕ-мĕр, пă-рă-нăр, çĕ-мĕ-рĕ-ттĕ-мĕр-ҫҫĕ.

4. Сăмахра пĕр сыпăкĕнҫе анҫах уçă сасă, ытти сыпăкĕсенҫе йăлт çуруçă сасăсем пулаççĕ, Кун пек сăмахра утарени кирек-хăçан та уçă сасă çине ўкет.

**Кăтартни**: Хăр-тăм, тă-рăс, вă-ран-тăм, пĕ-тĕр-тĕм, кăл-тăр-маҫ.

5. Сăмахра уçă сасăллă сыпăксем те, çуруçă сасăллă сыпăксем те пулсан, хăшĕ те хăшĕ уçă сасăллă сыпăк ҫăн кайри, вăл сыпăк сăмах пĕтĕмĕшĕнҫе пулмасан та,—утарени çал сыпăкри уçă сасă çине ўкет.

**Кăтартни**: тă-вăр-ла-наҭ, ҫа-ва-лан-тăм, та-па-ла-на-ттă-мăр, ҫĕн-те-рей-тĕ-мĕр, вă-ра-нат-пăр, тав-рăн-ма-рăм.

Калаçнă ҫух утаренисене сăмах вĕçне тăвас йĕрке тутарсем çывăхĕнҫе, йе тутарсем хушшинҫе пурнакан ҫăвашсен калаçăвĕнҫе анҫах палăраҭ (Тетĕш, Пăва уйесĕсенҫе). Паллах, çак йĕрке тутар ҫĕлхи майĕ кайнипе тухса кайнă. Просăпа çырас пулсан, çак уйрăм палăрмасҭ, кашни çын хăйне мĕнле кирлĕ çапла вулаҭ, анҫах сăвă ĕçĕ пĕр çак утарени йĕркипе кăна тытăнса тăраҭ. Сăвă вăл—утарениллĕ сыпăкпа утаренисĕр сыпăк пĕр-пĕрин хыççăн кĕвĕллĕ сыпăнса пынипе йака тухаҭ. Ҫăваш ҫĕлхинҫе утарени правĕлĕсем пĕр пулмасан, çакăн пек йапала пулма пултараҭ. Пăва ҫăвашĕсен сăвăçи çырнă сăвă—ҫăваш оплăçĕнҫи сăвăçшăн та, ҫăваш çыннисемшĕн те—сăвă пек туйăнмĕ, мĕншĕн тесен пĕриншĕн утарени пĕр тĕрлĕ, тепиншĕн тепĕр тĕрлипе—вĕсем сăвăсене тĕрлĕ майпа хураççĕ. Акă çакă сăвă пирĕн утарени правĕлĕпе çапла тухаҭ:

Вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ—  
Çĕн йĕрке килсен:  
Йухмĕ, йухмĕ тек куççулĕ  
Пурнăç хĕсĕкрен.

Ҫăваш ҫĕлхинҫе—хрансус ҫĕлхинҫи пек—утарени сăмах вĕçне ўкет тесен, çав сăвах çапла тухаҭ:

Вăхăт çитĕ, вăхăт пу-лĕ—
Çĕн йĕрке килсен:
Йухмĕ, йухмĕ тек куççулĕ
Пурнăç хĕсĕкрен.

Утаренисене сăмах вĕçне тунипе сăвă пăсăлса кĕвĕсĕр тухаť.

Кăмăллă çĕршывăн кăмăллă ђĕлхиçĕм,
Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăху:
Хĕрлĕ хĕртнĕ хурçă, çунтаракан çиçĕм,
Вĕри вутлă çулăм—есĕ пулăн ху.

Çак сăвă мĕнтен кĕвĕллĕ? Акă мĕнтен: „çĕр-шывăн", „ђĕлхиçĕм" сăмахсенђе утарени сăмах варĕнђе. „Хурçă", „Çиçĕм", „Çулăм" сăмахсенђе утаренисем малта, çавăнпа кĕвĕллĕ. Çав сăмахсенех—утаренисене сăмах вĕçне туса вуласан, сăвă кĕвĕллĕ пулмасť.

Пĕтĕм ђăваш çырăвĕнђе пĕр утарени йĕрки тума кирли çакăнтан паллă ĕнтĕ.

Пурте пĕлеççĕ: рифмă икĕ сăмах вĕçĕсем пĕр пек пĕтнинђен пулаť, анђах сăмах вĕçĕнђи утарениллĕ уçă сасăсем те пĕр пек кирлĕ (пăхатăп, савăнатăп). **„Улăп", „Пăхатăп"** сăмахсен те вĕçĕнђе **„ăп"** пур, анђах вăл рифмă пулмасť, мĕншĕн тесен **„пăхатăп"** сăмахра утарени „у" çинђе, „Улăп" сăмахра „у" çинђе. Акă тата пĕр сăвăç рифмă тăваť:

Еп çамрăк, вăйлă,
Хăрами хăйуллă...

Пăва йенђи ђăвашшăн „вăйлăпа" „хăйуллă" рифмă пулаť, мĕншĕн тесен, вĕсен утарени сăмах вĕçне ўкет. Сăвăç çак икĕ сăмаха рифмă тесе шутлаť. Анђах пирĕн ђăваш автономине кĕнĕ ђăвашсем **„вăйлă"** сăмахра утарени малти „ă" çине тăваççĕ, **„хăйуллă"** сăмахра утарени „у" çинђе пулаť. Çавăнпа та рифмă çухалаť вара.

Утарени йĕрки пĕр маррипе пĕр сăвă пĕрипшĕн пĕтĕмпех сăвă, тепĕриншĕн çав сăвах—мăшкăл йапали анђах. Çапла ан пултăр тесе сăвă ĕç технĕккипе пĕр утарени правĕлне пăхăнтарас пулаť.

Çак епĕр панă утарени правĕлĕсене тĕп ђăваш калаçăвĕнђен илнĕ. Çавăнпа вăл правĕлă авалтан пулнă темелле. Сăвă мĕн çырнă ђух çав правĕлсене хытă тытас пулаť.

Йлёк ђăвашсем таçта тухса çӳремен; вăрмансем хушшинђе пурăннипе, ђукунçул травашĕ çуккипе, айакри ђăвашсемпе пĕрлешмен, çавăнпа та ђăваш пек пĕђĕк халăх хушшинђе çавăн пек уйрăмлăх тухса кайнă. Малашне пĕрпĕринпе хутăшма аванланса пырать. Пĕр йенђи ђăвашсен тепĕр йенђи ђăвашсемпе ђас-ђасах курăшса хутăшмалли пулĕ,—вара ун ђух пĕр йенђи ђăвашсен ђĕлхипе тепĕр утăмри ђăваш ђĕлхин нимле уйрăм та пулмĕ, пĕр тĕп ђăваш ђĕлхи пулĕ.

Епĕр хытă шанатпăр: çапла пĕђĕккĕн-пĕђĕккĕнех, утаренисем çинђен „кӳртес—кĕртес“ сăмахсене мĕнле çырмаллисене çыркаласах вăрахăн ђăваш Пушкинĕсене, Лермăнттăвĕсене курăпăр. Вăхăт çитĕ!

## Çырусем.

### ВАÇАНККА ЙУЛТАШ!

Сана ђăрмантарас терĕмха. Малтанах калап: ан çиллен. Тус пулмаллах пĕрлешеймерĕмĕр пуљ, тен, кĕтмен-çĕртен ху патна çыру çырнине те есĕ питех ырра хумăн. Çапах та ђăваш ђĕлхи йађĕпе çыратăп.

Епĕ „Сборник стихов“ кăларма тытăннă. Архип Луккиђ та, Љвов П. тата ыттисем те ку ĕçе ырларĕç. Спорнĕкне пухса çитерсен кăларасси ђасах пулĕ.

Анђах „Канаша“ пăхкаласа тухрăм та, ырă сăвăсем, хастарлисем пит те сахал куртăм. Сан сăввусенђен пуçне хастарлă сăвăсем çукпа пĕрех. Йулташăм Ваçанкка, хăвăн мĕн пур сăввусене йарђђĕ спорнĕк ваљђи. Темĕн ђул тав - тăваттăм. Ђăваш ђĕлхи йађĕпе ыйтатăп. Ђăваш ђĕлхине ырă сунан пулсан,—йарăн, тесе шанатăп. Вăл спорнĕке епĕ тĕрлĕ автăрсене кӳртесшĕн—ăшђикĕ, сăнпиђĕ йенђен те тулли пултăр (разнообразного содержания). Йаран пулсан—ђасрах йар, хыпаланса йар.

Тата есĕ ђăваш халăхĕн пуласси шĕн, ђăваш ђĕлхи йађĕпе ђăваша йуратса тапакан ђĕресене, ђунлă çынсене пухса ушкăн тума кирлĕ пек туйăнмасти? Ђăваш халăхĕ таптанса пĕтес патне çитнĕ. Ђăваш ђĕлхи çухалас патне çитнĕ. Хамăр тăван ђĕлхене хăтарма ушкăнпе пурте харăс тăмасан, пирĕн натси çĕр пиђĕ çинђен çухаласса кĕтсех тăр.

Йулташăм Ваçанкка, ман санпа çывăхрах туслашас килет. Тиркев пулмасан (тумастăн пулсан)—хут йарах тăр. Ђăваш ђĕлхи йађĕпе ыйтатăп.

Тата сирĕн шкулта кам та кам ђăваш ђĕлхипе ђунтан йуратать, ђăвашăн мухтавлă пуласс не шанать—çавсен атрĕсне йар.

Ну, йуратнӑ йулташӑм, епӗ малтан ыйтнине тӑвӑн тесе шанса, сана ырӑ сунса йулатӑп. Ҫеҫпӗл Мишши.

P. S. Ваҫанкка, тен есӗ мана лайӑхах астумастӑн пулӗ. Епӗ санпа Ђӑваш хушшинђи РҪКС 1-мӗш сиесӗнђе курса паллашнӑђђӗ. Епӗ преҫитиум ђленӗђђӗ. Сиес фотокрафийӗ ҫинђе епӗ Филиппӑвпа Акеносӑв хушшинђе ларап.

Ну, вӑл-ку нимех мар, малалла пӗр пулар. Ҫ. М.

Шупашкар, 22-III—1921 ҫ.

## ЙУРАТНӐ ЙУЛТАШ РЕТАКТӐР!

Ҫӗршывӑм вилсе выртнӑ вӑхӑтра епӗ айакра Украйнӑ улӑхӗсем тӑрӑх ҫухалса сӗтӗрӗнсе ҫӳретӗп. Мӗн пур шухӑшӑм тӑван ҫӗршывӑм ҫинђеп кӑна, ҫак выҫ самана Асапӗ ҫӗршывӑма сарлака ҫӗр пиђӗ ҫинђен пӗтӗмпех шӑлса ҫухатнӑши, епӗр—ҫӗршывран саланса пӗтнисем—ӗмӗрех ҫуралнӑ ҫӗршывсӑр, хамӑра ҫуралнӑ халӑхсӑр тӑлӑххӑн тӗнђе тӑрӑх сӗтӗрӗнсе ҫӳрӗпӗрши, тесе шухӑшлатӑп кунӗн-ҫӗрӗн, кунӗн-ҫӗрӗн...

Анђах хӑш ђух хӗвеллӗ шанӑҫпала ӑса улталас килет. Ун ђух вара епӗ шухӑшлап: тен пӗтмӗпӗри, тен Асап иртӗ, каллех ҫӗршывӑм ђӗрӗлӗ, епӗр те, сапӑнса пӗтнӗ тӑлӑхсем, каллех савнӑ ҫӗршывӑма нухӑнса ђӑваш литтераттурӗ ђӗрӗлнине курӑпӑр,—тетӗп. Йуратнӑ йулташӑм, пурши ес, ҫукши ес? Тен, ӑса улталан шухӑшсемпе сан сӑнна куҫ умне тӑратрӑми. Ах, пӗлесђӗ, сывӑши «Канаш» йе Асап аллинђе вӑл вилсе пӗтрӗши. Пӗлесђӗ, пӗлесђӗ! ҫавӑнпа ҫак ҫырӑва ҫыратӑп. Йулташӑм, йуратнӑ ретактӑр, пурши ес, ҫукши ес—сывӑши «Канаш». Йулташӑм, ес пур пулсан, калла хут йарђӗ

Йуратнӑ йулташӑм, ес пур пулсан, ҫӗршывӑм пӗтӗмпех пӗтменха, ҫӗршывӑм ђӗрӗлӗ, тесе калӑттӑм. Тен, ђӑнах та «Канаш» нурӑнати. Апла пулсан пӗлтерӗр, кам-кам ретаксинђе. Ӑҫта ӗҫлеҫҫӗ Солӑттӑв Н, Ар. Луккиђ — «Канаш» ретактӑрӗ Милли тенине илтнӗђђӗ. Йулташӑм, пӗлтерӗрши есӗр мана, пӗлтерместӗр пулсан та калла хут йарӑр, ҫӗршывӑм мӗнле.

Пӗтӗмпех вилсе выртати. Канаша кам вулаӗ, кам ҫыраӗ. Ђӑваш поеҫийӗ мӗнле майа ҫапӑнђӗ. Йулташӑм, пӗлтерӗр.

«Канаш» сывӑ пулсан, епӗ те мӗнле те пулин ҫырса парӑттӑмђӗ ун ҫине.

Йуратнӑ йулташӑм, сире салам каласа, вилсе выртас ҫӗршывӑма... пӗтӗм ђунтан-вартан йуратса йулатӑп. Ҫеҫпӗл Мишши.

## Тĕрлĕ хутсенҫен.

...Прошлая жизнь моя разделяется на 3 периода: 1-й—до 1911 года, июня месяца, протекавшее хотя и в ужасной бедности, но светлое, яркое детство, 2-й же, начавшийся жестоким ударом, ужасной драмой в семейной жизни—потерей отца,—период мрачный и самый мрачный в моей жизни полный материального и духовного гнета буржуазного общества,—закончил я 1918 год началом третьего периода, вступлением моего в Компартию, когда я почувствовал себя таким вольным, сильным, свободным от всех семейных, религиозных и общественных предрассудков, вместе с пролетариатом я почувствовал себя властелином жизни. С тех пор мое сознание ясно. Мысли могучи. Я—коммунист!

Членом Исполкома своей области, Председателем Ревтрибунала, деятелем пролетарской юстиции вступаю в 22 год своей жизни Карьеризма, безчестности нет в моей натуре, надеюсь никогда не замарать звания коммуниста...

(Хăй 21 ҫул тултзрнă май ҫырнă хут татки).

Будет время — не будут одни утопать
В золотом, полном благами, море,
А другие, меж тем, под нуждой изнывать
Надрываясь за хлеб в вечном горе.
Будет время, — когда и лачуги рабов
Осенит свет Свободы и счастья,
Улетят далеко, в даль мрачных веков
Дни тревог, слез и бурь и
ненастья.—

(Афтокрăф—Ҫеҫпĕл М. ҫапла ҫырнă)

...Безконечно возмущает меня то, что я явился жертвой самых маленьких обстоятельств...

Я уверен, буду втолкнут в тюрьму. Теперь уж постараются. Повидимому я кончу очень плохо. Одного желаю, чтобы достало сил среди безмозглых, тупых баранов, среди всех гонений остаться коммунистом. Моя участь теперь решена. Мне в Чувашии, в своей области житья не будет. (Дневник).

...Лист допроса считаю глупой бумажкой и не подписал. Я думаю, что только дурак может меня подозревать в поджоге Отдела Юстиции, думал, что задают просто в шутку такие вопросы с целью унижения...

(Сут маттериалĕсенҫен—Куҫмин М. кăтартни).

...Читал, но подписываться не буду и все, что я говорил во всех показаниях есть **ложь, и** Кузьмин мне ничего не говорил. Давал ложные показания, на Кузьмина только потому, что у нас с ним личные счета и я хотел отомстить ему за все.

(Миронăв елекçĕн йулашки çырăвĕ).

...Преступление считаю не доказанным... Но тов. Кузьмин допрашивающих считал дураками, давая подобные показания.

Полагал бы Кузьмина заключить в концентрац. лагерь сроком на 5 лет, выслать в гор. Архангельск для отбывания наказания, впредь не занимать ответственной должности в Советских учреждениях... (Сут маттериалĕсенчен).

С августа месяца нахожусь здесь (На Украине, в Красной армии. Раздет, разут я и голодаю так же, как и вы. Служу рассыльным при канцелярии одного военного учреждения.

Подметаю я мою пол, рублю дрова, топлю печи, бегаю целый день с пакетами, как собака.

...А нога гниет! Так далек от меня Мир Искусства. Так далек...

(Çырусем, 15/XII—21 çул, Кейу хули).

...Я весь раздраженное и бесмысленное существо(!). Невольно разбираю, какие условия окружают мою материальную жизнь. Десятилетняя болезнь в конец разрушает мой организм. Скоро я буду накануне смерти. Каково это чувствовать, когда хочется жить художественной жизнью, что-либо оставить от своего существования чувашской национальной культуре. Более месяца не был в бане и не менял белья. От меня несет ужасной вонью. Во всем теле невыразимый зуд. По телу ползают вши. Эти вши— они одни могут управлять движением моего мышления.

Дневник, за 1921 год.

...Федя, не презирай меня за то, что душа моя надломлена ужасом окружающей картины. Вижу на станции голодных с страшными исхудалыми лицами, в лохмотьях—беженцев с Волги. В прошлые сильные морозы то тут, то там они умирали кучами—больные, замерзшие, и их сотнями, как дрова, накладывали на дровни и увозили, ничем не прикрытых, торчали голые руки и голые ноги; ноги мотались, повиснув с саней. Другие... совсем босые, неприкрытые... едут и стонут. Как не надломиться душе от этих стонов, Федя, как страшно! больно мне!

На базаре, где торгуют на миллионы, где и булки, и хлеб, и сало и все... босые, покрытые язвами, в отрепьях беженцы с Волги лежат и просят бессловесно хлеба... удручающие картины.

...Я усталый, разбитый и голодный С голоду теряешь сознанье и рассудок, так что по получении хлеба с'едаешь его в раз, не размышляя о завтрашнем дне Сейчас я сыт: с'ел за 3 дня вперед. Пока хорошо, но как подумаешь о завтрашнем дне... так беспомощным чувствую себя... (Покрышкăна патне янă çыру)

# АСӐРХАТТАРНИСЕМ.

[1]) Çеçпӗл Мишши 1918-мӗш çултах комуниссен парттине кӗнӗ. Мускавра, акитаттӑрсемпе пропакантиссен 6 уйӑхлӑх курсӗнҫе ҫухне 1919-мӗш çулта комсомола кӗнӗ. Пӗтӗм Совет çӗрӗнҫи Ҫӑваш комсомолӗн I-мӗш сйес преçитиум ҫленӗҫҫӗ, кайран Опкомол ҫленӗ пулса ӗçлерӗ.

[2]) Мӗншӗн çакӑнса вилнине Украйнӑран офитсиаллӑ хут урлӑ пӗлеймерӗмӗрха халиҫҫен те, анҫах мӗншӗн вилни вӑл паллах пулӗ. Ӑна хӑй вилнӗ пахҫанах ытарнӑ. Вил тӑпри çине Çеçпӗлӗн йулташӗ. Покрышҫӑ Хв. пӗр йуман йупа лартнӑ. Йупи çине кам вил тӑпри иккенне, тата хаххулла: „Çак пӗр пӗҫҫен вил тӑпри—хастар поет тӑпри вӑл; çӗн тӗнҫен çӗн кӗввисем уппа пӗрле ҫыллай кӗҫӗç пӳр çӗре" тесе сӑвӑ çырнӑ. Покрышҫӑ й-шӑн Çеçпӗле асӑнса хаххулла çырнӑ сӑввисем те ҫылай. („Сунтал"ӑн 1927 ç.) 7—8-мӗш №-рпе вула

[3]) Имашинисӑм, çимволисӑм тенине „Сунталӑн 3-мӗш №-ҫе ӑнлантарса панӑ. Сӑвӑра сӑпляха нимрен мата хуракансене çапла каласçӗ. Çеçпӗл М. хӑй пултаруллӑхне, талантне пӗтӗмӗшпе кӑтартса хӑвараймарӗ, çамрӑкла (23 çулта) вилҫӗ. Вӑл нимрен малтан сӑвӑ формине лайӑхрах вӗренме хушать, сӑвва тӗплӗ савалассине нимрен хакла хурать.

> „Ҫӑваш пойеҫӗсен малтан сӑвӑ хурӑмне тӑвас пулать. Кивӗ хурӑм, çиҫ сыпӑклӑ сӑвӑ ҫӑваш поеçинҫе ку таранҫҫен патша пулса тӑнӑ. Халӗ çӗнӗ ӑслайсем кирлӗ. Çӗнӗ хурӑм пултарас. Ку тӗрӗс çул, мӗншӗн тесен, карттин тӑвас тесен, малтан сӑрӑ кирлӗ, çурт тӑвас пулсан, ҫӗ малтан кирпӗҫ кирлӗ", тет.

Имашиниссенҫен вӑл сӑвӑ формисене вӗреннӗ. Çырӑвӗсенҫе тӑтӑшах В. Прӳссов, А. Плок, Паҫмӑнт, А. Пелӑй. Александровски поетсене асӑнать. Виктӑр Кӳко, К. Кейнӗ, А. Пушкин, Лермӑнттӑв сӑввисене йуратса вуланӑ, вӗсене çырса илнӗ, пӗхмасӑр калама вӗреннӗ.

[4]) Ку спорнӗке епӗ хаçат-шурналсенҫен пухса пынӑ сӑвӑсем тата Ç. М. хӑй „Шуçӑм" шурналта сӑвӑсен çӗнӗ форми пирки сӑмах хускатма сӗнсе, ман пата Вӑрнара йанӑ сӑвӑсем çеç кӗреççӗ.

Ик-виç сăввине Украйнăра Покрышђă Хĕветĕрĕ усранĕ. Мишшан 1919-мĕш çултах „Канаша“ пĕр „Ака çинђе“ йатлă паха сăвă кĕпĕђђĕ. Унăн тата „Çĕнĕ шăхлиђ“, „Ђĕлĕхсем йанраççĕ“ „Çĕнĕ ђĕлхесен кĕвви“, „Иртнĕ ĕмĕр“ йатлă сăвăсем пулма кирлĕ. Куçарнă сăвă таткисем ђылай. Сăмахран—акă: „Капля дождевая“ тенине мĕнле куçарнине илсе пăхар:

| | |
|---|---|
| Çăмăр тăмламĕ | Çăмăрăн тăмламĕ |
| Калаť ыттисене: | Калаť ыттисене: |
| —Мĕн епĕр кунта ђўређене | Мĕн епĕр хайаррăн шаккатпăр |
| пит хытă таккатпăр? | ку ђўређене!.. |
| Тăмламсем калаççĕ: | . . . . . . . . . . . |
| Кунта ђухăн пурнаť, | . . . . . . . . . . . |
| Тырă ўсет тесе, ăна епир | . . . . . . . . . . |
| хыпар килсĕ калатпăр. | . . . . . . . . . . |

5) Çеçпĕл тата лайăх хутошнĕк пулнă карттинĕсене пухмалла.

6) Сăвă формисем çинђен çырнă çĕрте унăн вырăсла: „В чувашских стихах мужское окончание преобладает над женским, а дактилические и импердактилические окончания встречаются очень редко в глаголах наст. времени, множеств. числа“ тенĕ вырăн пур. Ку Çеçпĕл М. сăвă формисене хытă вĕреннине, ђăваш сăввисене хытă сăнаса пынине кăтартаť.

7) Автăрĕ ку вырăнта пĕрре „Çĕнкун“ çырнă, тепре „Уйар“ тенĕ. Унтан иккĕшне те хуратнă.

8) Пĕрре „Пернсе“, тепре „Тивсе“ тенĕ.

9) Ку сăвва Ç. М. 3—4 тĕслĕ çырнăђђĕ. Вăрнара ман пата ăна „Малаш йурри“ тесе йанăђђĕ. Вăл ку спорнĕкринђен авантарахђĕ, илемлĕђђĕ.

10) „Выç псалом“ унăн 5 сăвăллă пулнă. „Йулашки ђĕл“ тени те пысăк сăввах мĕн. Вĕсене тупма пулмарĕ.

11) Ку сăвăсене хăй асапланса вилес патне çитнĕ майĕпе „çăка тураттисем“ аса килсе аптăратнă вăхăтсенђе çырнă. Ђи йулашки сăввисемох çук—Ђерникăв архивĕсене хамăр çитсе шырамасăр тупма пулĕши вара вĕсене... шарламаççĕха.

12) Пĕрре „Анлă Атăл“, тепре „Мĕскĕн Атăл“ тенĕ—иккĕшне те хуратнă.

ТУПМАЛЛИ:

Стр.

1 Умсăмак . . . . . . . . . . . . . . . . 3
2 Çĕн кун аки . . . . . . . . . . . . . 7
3 Катаран каç килсен . . . . . . . . . 8
4 Ђăваш ђĕлхи . . . . . . . . . . . . 9
5 Ђăваш ађине . . . . . . . . . . . . 10
6 Ђăваш поетне Ахаха асăнса . . . . . 11
7 Ђăн ђĕрĕлнĕ . . . . . . . . . . . . . 12
8 * * * . . . . . . . . . . . . . . . . 14
9 Пуласси . . . . . . . . . . . . . . . 15
10 Ђăваш арăмне . . . . . . . . . . . 16
11 Иртнĕ самана . . . . . . . . . . . 18
12 Пурнăçпа вилĕм . . . . . . . . . . 20
13 Йăвăр шухăшсем . . . . . . . . . . 21
14 Ьыç псалом . . . . . . . . . . . . 23
15 Кĕпер хывăр . . . . . . . . . . . . 24
16 Пайантан . . . . . . . . . . . . . 26
17 Хĕрлĕ-хĕрлĕ мăкăњсем . . . . . . . 26
18 * * * . . . . . . . . . . . . . . . 27
19 Епĕ вилсен . . . . . . . . . . . . 28
20 * * * . . . . . . . . . . . . . . . 30
21 Хурăç шанђăк . . . . . . . . . . . 32
22 Шăршлă каç йăвăрри . . . . . . . . 33
23 Инçе çинçе уйра . . . . . . . . . . 34
24 Тинĕсе . . . . . . . . . . . . . . . 36
25 Сăвă çырассипе утарени правĕлĕсем . . 39
26 Çырусем . . . . . . . . . . . . . . 42
27 Асăрхаттарнисем . . . . . . . . . . 46

## ПЙЕССĂСЕМПЕ КАЛАВСЕМ.

1. **Н. Осипов.** Кушар. IV пайлă трамă. 80 стр. **Хакĕ 44 пус.**
2. **Шенкер**. Çиçĕм çиçрĕ... кĕмсĕртетрĕ. Повĕç. 78 стран. **Хакĕ 32 пус.**
3. **Трупина Мархви.** Çĕнтерҫĕ. Пйессă. 64 стр. **Хакĕ 30 пус.**
4. **Йуман М**. Укăлҫа касси. Пйессă. 100 стран. **Хакĕ 60 пус.**
5. **Пайраш.** Телейсĕр кунсем. Пйессă. 55 стр. **Хакĕ 30 пус.**
6. **П. Йурккин**. Вĕрентекен. 3 пайлă трамă. 52 стран. **Хакĕ 24 пус.**
7. **Хумма Çеменĕ.** Комсомол калавĕсем. Спорнĕк. 60 стран. **Хакĕ 20 пус**
8. **В. Тўмер.** Пуçламĕш (1925 çул). Пйессă. 40 стран. **Хакĕ 15 пус**.
9. **Трупина Мархви**. Хĕрлĕ калстук. Калав. 23 стран. **Хакĕ 8 пус.**

---

Кăтартнă кĕнекесене Ҫăваш Кĕнеки Уйрăмĕн кĕнеке макаçăнĕсенҫе тата тўрех çак атрĕспе çырса илме пулат́

Шупашкар, Канаш урамĕ, 15.
ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ.

Хакӗ 20 пус.
Цена 20 коп.

ÇЕÇПЕЛЬ МИШШИ. СТИХИ (на чувашском языке)
Чувашское Государст. Издательство „Чувашгиз"
Город Чебоксары, Канашская 15.